Иванов К.В. Шуйттан чури: виҫӗ пайлӑ трагеди / К.В. Иванов // Чӑваш сӑмахлӑхӗ: X класӑн вӗренӳпе вулав кӗнеки. – Шупашкар, 1996. – С. 86-91.

КОНСТАНТИН ИВАНОВ (1890–1915)

Константин Васильевич Иванов 1890 ҫулхи майӑн 27-мӗшӗнче Ӗпхӳ кӗпӗрнин Пелепей уесӗнчи (халӗ Пушкӑрт республикин Пелепей районӗ) Слакпуҫӗнче хресчен килйышӗнче ҫуралнӑ. Пуҫламӑш шкулӑн виҫӗ ҫулне тӑван ялта, тепӗр ҫулне Кекенре вӗренет. 1902 ҫулта Пелепейри хула шкулне кайса кӗрет. Ҫулталӑкран Чӗмпӗрти чӑваш шкулне каять. Революци юхӑмне хутшӑннӑшӑн ӑна 1907 ҫулхи март уйӑхӗнче ытти ачасемпе пӗрле шкултан кӑларса яраҫҫӗ. Иванов вӗренме кӗрес ӗмӗтпе тӗрлӗ ҫӗре ҫитсе пӑхать, анчах ниҫта та кӗреймест.

1907 ҫулхи кӗркунне ӑна И. Я. Яковлев Чӗмпӗре куҫару ӗҫӗпе ӗҫлеме чӗнсе илет. 1909 ҫулта поэт хулари гимназире учитель ятне илме экстерн йӗркипе экзамен тытать. 1909–1910 ҫулсенчи хӗле тӑван ялта ирттерет. 1910 ҫулхи кӗркунне каллех Чӗмпӗре таврӑнать те Чӑваш шкулӗ ҫумӗнчи хӗрачасен икӗ класлӑ училищинче чистописанипе рисовани учителӗнче ӗҫлеме тытӑнать. Поэт шкулти вӗренӳ кӗнекисене кӑларас ӗҫе те хутшӑнать. 1914 ҫулта ӳпке чирӗпе тата хырӑм катарӗпе хытӑ чирлесе ӳкет те Чӗмпӗртен тӑван яла каять. Вӑл 1915 ҫулхи мартӑн 26-мӗшӗнче вилнӗ.

Литература ӗҫне Иванов 1906 ҫулта хастарлӑ хутшӑнма тытӑнать. "Нарспи" поэмӑна, "Тимӗр тылӑ", "Тӑлӑх арӑм", "Икӗ хӗр" юмахсене, "Шуйттан чури" трагедие, "Выҫӑпа аптранӑскерсем", "Хальхи самана" тата ытти сӑвӑсене 1907–1908 ҫулсенче ҫырнӑ. Революци юррисемпе пӗрлех вӑл М. Ю. Лермонтов, А. В. Кольцов, Н. А. Некрасов, Н. М. Огарев сӑввисене куҫарнӑ. Поэт И. В. Гетен "Рейнеке-Лис" поэмине те куҫарнӑ, алҫырӑвӗ ҫухса кайнӑ.

"Нарспи" поэмӑпа виҫӗ юмахӗ 1908 ҫулта "Чӑваш халӑх халапӗсем" кӗнекере тухнӑ. М. Ю. Лермонтовран куҫарнисем ҫав ҫулах "Калашник хуҫа ҫинчен хунӑ юрӑ" кӗнекере пичетленнӗ.

Иванов художник ĕçне те кăмăллать, букварь валли ӳкерчĕксем хатĕрленĕ, уйрăм картинăсем тунă. Поэт фольклор материалĕ те чылай пухнă.

ШУЙТТАН ЧУРИ

Виçĕ пайлă трагеди
Халăх калавне улăштарса çырнă

Пĕлĕт саншăн тимĕр пулĕ,
Тĕнче саншăн тамăк пулĕ,
Санăн кĕллӳ тĕтĕм пулĕ.

ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Каласа паракан
Чул çумĕнче пĕр этем
Ларать хытă йăнăшса.

Шăллĕ
Апла пулсан кай кунтан.
Эпĕ сана тăван мар!
Тăшман çынна нихçан та
Памăп турă панине.

Пиччĕшĕ
Вĕлеретĕп! Парсан пар!

Шăллĕ
Вĕлер чуну çитейсен.

Каласа паракан
Ватă юман хыçĕнчен
Шуйттан татах хĕтĕртет.

Шуйттан
Ил укçине, ил туртса!

Каласа паракан
Ылтăн-кĕмĕл çап-çутă,
Хутаç тулли ялтăрать.

Шуйттан
Ил укçине – вăл санăн.

Каласа паракан
Ухмах çыннăн куçĕсем
Йăлтăр-ялтăр çунаççĕ.
Хутаç çине пăхнă та
Хутаç патне туртăнать.
Анчах шăллĕ укçине
Хăйĕн айне хурса ларнă.
Ик аллинче ик çĕçĕ –
Йăлтăртатса тăраççĕ.

Шăллĕ
Вилсен вилĕп, чĕрĕлле
Памăп турă парнине.

Каласа паракан
Ватă юман хыçĕнчен
Шуйттан татах хĕтĕртет:

Шуйттан
Ил, ил, ухмах, мĕн тата
Каллĕ-маллĕ пусатăн?

Каласа паракан
Акă тăр-тăр чĕтресе
Сăнă çӳле çĕкленчĕ,
Анчах чунĕ çитмесĕр
Татах аяла анчĕ.
Ватă юман хыçĕнчен
Шуйттан татах хĕтĕртрĕ.
Сăнă татах çӳлелле
Яр улăхса кайрĕ те,
Пиччĕш хăйĕн шăллĕне
Чиксе хучĕ укçашăн.
Çӳлтен кĕр-кĕр аслати

Кĕрлет, вĕркет хаяррăн.
Хура пĕлĕт куç харши
Тата хытă пĕрĕннĕ.
Ухмах этем шăллĕне
Сăнăпала чиксенех
Укçа патне сикрĕ те
Илчĕ укçа хутаçне,
Ташша ячĕ савăнса.

П и ч ч ĕ ш ĕ

Мана мĕн пит кирлĕччĕ?
Укçа, укçа, – акă вăл!
Укçа пулсан мул та пур,
Унтан урăх мĕн кирлĕ?
Ылтăн-кĕмĕл манăн вăл,
Ялти пуян эпĕ вăл!
Кайăп киле ыранах,
Çитĕп киле каçченех,
Ылтăн-кĕмĕл çурт лартăп,
Выльăх тытăп пинĕпе.
Ирттерĕп çав пурнăçа
Савăнса çеç, кулса çеç.
Текех канăçсăр çынсем
Вăрçăсенче çӳреччĕр.
Мана тата мĕн çитмен?
Манăн акă пурте пур.
Ылтăн-кĕмĕл манăн вăл,
Ялти пуян эпĕ вăл,
Укçа пулсан мул та пур,
Унтан урăх мĕн кирлĕ!

К а л а с а п а р а к а н

Шуйттан юман хыçĕнчен
Сиксе тухрĕ ахăрса:
Этем хыççăн шуйттан та
Ташша ячĕ савăнса.
Ухмах çынна курăнми
Е ыталать аллипе,
Е чуптăвать тутипе
Шуйттан чури тиейсе.
Этем укçа хутаçне
Хăрах алăпа йăтнă.
Тепĕр аллинчи хĕçпе
Шаккать укçа хутаçне,
Хутаç ăшĕнчи укçи
Шанкăртатать илĕртсе,
Ылтăн-кĕмĕл кĕввипе
Çын такмаклать ташласа.

П и ч ч ĕ ш ĕ

Мĕншĕн кунта кăлăх
Манăн пуçа çухатас?

К а л а с а п а р а к а н

Этем çапла шухăшлать
Хăй ăшĕнче савăнса.
Çӳлтен, çӳлтен çавăнтах
Темле сасă илтĕнет:

П и р ĕ ш т и

Мĕскĕн этем, мĕн турăн?
Куçна уçса пăх, мĕскĕн,
Ухмах ĕçӳ çинелле.

К а л а с а п а р а к а н

Тăпра çине çавăнтах
Кайрĕ этем йăванса,
Ăнĕ тухса кайнипе
Ури анчĕ хуçăлса.
Сасартăках çил тухать,
Тухса кĕрлесе каять,
Пĕтĕм çĕре кисретсе
Аçа шартлатса ярать.
Шуйттан юман хыçĕнче
Ахăлтатать хăрушшăн,
Ăнсăр этем патнелле
Аллисене вăл тăсать,
Ватă юман хыçĕнчех
Ахăлтатни илтĕнет:
Шуйттан çăварне карса
Ахăлтатать савăнса.
Ăнсăр этем, вилнĕ пек,
Кăвакарса кайнă хăй,

Шуйттан ăна пăхать те
Ахăлтатать хăрушшăн,
Тĕнче тĕпне хускатса
Çут тĕнчене ишес пек,
Аслă тăват кĕтеслĕ
Çутçанталăка илес пек...

Чул çумĕнче пĕр этем
Пуçне çĕклет йăнăшса.

Ш ă л л ĕ

Асапланса выртатăп,
Сăнă тухрĕ витĕрех
Кăкăрăма шăтарса.
Мана хамăн айăпшăн
Турă асап ячĕ пуль.
Эй турăçăм, пиччем те
Ку асапа курминччĕ,
Усал ĕçне тăвиччен
Унăн ăсне çутатсам;
Тăвансемшĕн çапăçма
Тасат унăн кăмăлне;
Вăрçă хушшине кӳртсе
Вĕрилентер чĕрине,
Тăвансемшĕн çапăçса
Тасатсамччĕ айăпне.
Вăл та çаплах, ман пекех,
Шуйттан чури пулминччĕ.
Пиччем, пиччем! Эсĕ те
Суккăр ан юл ман пекех.
Куçна уçса пăх, пиччем,
Мĕнле эпир çынсемччĕ?!
Укçашăнах çунтăмăр,
Ылтăн-кĕмĕлшĕн çунса,
Çынна тĕрлĕ хĕстерсе,
Çынна йĕртсе-макăртса
Пуçтартăмăр пуянлăх.
Пуçтартăмăр пуянлăх
Хамăр ырă курасшăн,
Анчах пухнă мулпала
Эпир тăранмарăмăр.
Вăрçă тухрĕ... Вăрçăра
Вилнисене çаратса
Укçа тупма, пуçтарма
Эпир вăрçа килтĕмĕр.
Анне ячĕ ӳлесе
Пирĕн шухăша сиссе,
Урайĕнче йăваланчĕ
Мĕскĕн анне ман умра:
"Ан кай, ачам, ан кайсам,
Хăвăн пуçна пĕтерĕн,
Ан ухмахлан укçашăн,
Мĕн пурри те çитĕ-çке..."
Анчах пирĕн чĕресем
Хускалмарĕç çапах та.
Арăм ячĕ ӳлесе
Тăлăх юласне сиссе:
"Ан кай, ан кай, пĕтетĕн,
Чуну ӳкĕ тамăка..."
Анчах эпĕ ăна та
Итлемерĕм çапах та.
Ман шухăшра укçа çеç
Йăлтăртатса тăратчĕ.
Хăрамасăр-тумасăр
Тухрăмăр та килтĕмĕр.
Анне юлчĕ ылханса,
Арăм юлчĕ макăрса.
Анчах çӳлтен, эй турă!
Эсĕ пире сăнанă.
Хамăн усал шухăшшăн
Эсĕ мана тавăртăн:
Вăрçа кĕнĕ-кĕменех
Сăнă чикрĕç кăкăра;
Ăнсăр пулса, йăванса
Юлтăм эпĕ хир варне
Пĕр-пĕчченех çакăнта.
Хамăн айăпа курса,
Ирсĕр ĕçĕме пĕлсе
Пăшăрханса çунмашкăн,
Пĕр-пĕччене выçăхса
Асапланса вилмешкĕн

Тискер пушӑ хир варне,
Туррӑм, мана пӑрахрӑн.
Ирсӗр чунлӑ усала
Тивӗçлипе тавӑртӑн...
Вӑйӑм пӗтрӗ, ӳт сивӗ,
Чӗрем ӑшне хурт çиет.
Эй турӑ! Айӑпӑмшӑн
Чунтан-вартан ӳкӗнсе,
Чунтан-вартан йӑлӑнса
Санран çӑлӑнӑç ыйтатӑп!
Сӗм пӗлӗтсем юхаççӗ
Çут тӗнчене хуплас пек.
Тамӑк тӗпӗ уçӑлать
Ман чунӑма çӑтас пек.
Шуйттан тухать тамӑкран
Ман чунӑма илесшӗн.
Вилӗм, вилӗм килет ав,
Тӑсать хӑйӗн аллине.
Тамӑк çунать ман айра,
Ав шуйттансем килеççӗ.
Эй турӑçӑм, çӑл мана,
Пӗтме ан пар чунӑма!..

Каласа паракан

Вӑйӗ пӗтсе çитнипе
Унӑн чӗлхи чарӑнчӗ.
Куçӗсемпе анчах вӑл
Çӳле пӑхса кӗлтӑвать.
Татах вӑйне пуçтарса:
"Эй турӑçӑм", – терӗ те
Ӑнсӑр пулчӗ çавӑнтах
Вӑйран-халран кайнипе.

Тӗттӗмленчӗ, каç пулчӗ,
Çил-тӑвӑл та лӑпланчӗ,
Пӗчӗк ушкӑн çар килет
Вилнисене пуçтарма.
Вилнисене пуçтарчӗç,
Шӑтӑк чавма тытӑнчӗç.
Сӑнӑсемпе, хӗçсемпе
Аслӑ шӑтӑк тӑваççӗ.
Улӑп юман айӗнче,
Аслӑ чулӑн çумӗнче
Вилнисене юрӑпа
Шӑтӑк ӑшне антарчӗç.
Ёречӗпе вырттарса
Виççӗ ӳксе пуççапрӗç,
Ура çине тӑчӗç те
Виçӗ хутчен пуç тайрӗç.
"Тӑпра ыран ярӑпӑр,
Чӳкне ыран чӳклӗпӗр", –
Тесе вӗсем уттарчӗç,
Тӗттӗм çӗрте çухалчӗç.

Ыйтусемпе сӗнӳсем.

1. Мӗн вӑл трагеди? Чӑваш драматургийӗн паллӑрах трагедийӗсене аса илӗр.

2. Я. Г. Ухсай çырнӑ "Шуйттан чури" трагедие тупса вулӑр, вӑл К. В. Иванов шухӑшӗсене малалла мӗнле аталантарнине сӑнаса пӑхӑр.

3. Çынлӑх, чунлӑх, пуянлӑх, танлӑх çинчен К. В. Иванов хускатнӑ ыйтусем тавра калаçу ирттерӗр.

Калаçура çак ыйтусене хуравлама тӑрӑшӑр:

– укçа-тенкӗ, пурлӑх-ырлӑх хаклӑ-и е тӑванлӑх-хурӑнташлӑх хаклӑ?
– суя ӑшпиллӗхе чӑн-чӑн чунлӑхран эсир мӗнле уйӑратӑр?
– яш-кӗрӗм хутшӑнӑвӗнче "шуйттан чурилӗх" палӑрать-и?